28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
27
ЭРНЕКУН
148(6894) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ÇЕНТЕРӐЙ ЯЧĔПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Вăрçă хыççăнхи кĕоке вăхăтра пирĕн промышленность, вăрçă çулĕсенче тухăçлăн та хăвăрт ĕçлеме вĕренсе çитнĕскер, нимĕç захватчикĕсем аркатнă хуласемпе ялсене ура çине тăратас, халăх хуçалăхне малалла аталантарса пырас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ.

Мирлĕ аталану тапхăрне кĕнĕ хыççăн çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлесе тунă çитĕнӳсем пирĕн Чăваш республикинчи промышленноçăн та пĕчĕк мар. Чăваш халăх уявне производствăллă парне кӳрессишĕн кĕрешсе, республикăри чылай предприятисем иртнĕ çур çулта продукци туса кăлармалли плана ăнăçлăн тултарчĕç, планран иртерсе сахал мар продукци туса кăларчĕç. Уяв умĕнхи ăмăртура лайăх ĕçленĕ предприятисенчен Çĕмĕрлери комбината, Канашри вагонсем юсакан, Улатăрти паровозсем юсакан заводсене, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода уйрăмах палăртса хăвармалла. Вĕсем июнь уйăхĕнчи производство планне срокчен тултарчĕç. Июнь уйăхĕнчи республикăри апат-çимĕç промышленноçĕ те планпа пăхнинчен нумайрах продукци туса кăларчĕ.

Анчах та социализмлă промышленноçра ĕçлекенсем ку таранччен тунă ĕçсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем мирлĕ аталану тапхăрĕнче хăйсем умĕнче тăракан çĕнĕ задачăсене татса парассишĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн халăх хуçалăхĕ умĕнче çитес вăхăтра татса памалли питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вăл задачăсем: «Вăрçă çĕршыва кӳнĕ сурансене хăвăртрах тӳрлетĕр, пирĕн совет государствин вăй-хăватне татах та çӳлерех çĕклĕр!», тесе Сталин юлташ ĕççыннисене чĕнсе каланинчен тухса тăраççĕ. Нимĕç фашисчĕсем аркатнă предприятисемпе электростанцисене, шахтăсемпе рудниксене хăвăртрах юсаса ĕçе яма, çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем тума, çĕршывпа халăха кирлĕ продукцине ытларах туса кăларма пурте тухăçлăн ĕçлени, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлени кирлĕ. Çакна тĕплĕн ăнланса илсе, промышленноçра малта пыракансем — Магнитогорскпа Кузнецк металлургĕсем аслă Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçласа ячĕç, Совет Союзĕнчи мĕнпур металлургсене çав ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каларĕç.

Магнитогорскпа Кузнецк металлургĕсен чĕнĕвĕ пĕтĕм Совет çĕршывĕпе хăватлăн сарăлчĕ, вĕсен чĕнĕвне Таван çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем хапăл туса йышăнчĕç. Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва металлургсем хыççăн халăх хуçалăхĕн ытти нумай отраслĕсенчи работниксем те активлăн хутшăнчĕç.

Хăватлă ăмăрту хумĕ пирĕн Чăваш çĕршывне те çитрĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем Магнитогорскпа Кузнецк металлургĕсен чĕнĕвне хапăл туса кĕтсе илчĕç. Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва пирĕн республикăри предприятисенчен чи малтан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Çăлав орденлĕ завод коллективĕ хутшăнчĕ. Орденлă заводра ĕçлекенсем çитес çывăх вăхăтра мĕнле çитĕнӳсем тумаллине тăрăкланă палăртса, республикăри мĕнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнма чĕнсе каларĕç.

Халĕ республикăри промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче çав чĕнĕве сӳтсе-явса социализмлă ăмăртăва хутшăнас ĕç пырать. Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва Канашри вагонсем юсакан завод, Куславкка комбиначĕ тата ытти предприятисем те хутшăннă.

Анчах та çак ăмăрту хăй тĕллĕнех сарăлса пырасса шанса лармарах. Промышленность Халăх Комиссариачĕн руководителĕсен, предприяти директорĕсен, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен задачи—орденла завод коллективĕн чĕнĕвне кашни фабрикăпа заводра, промартельпе мастерскойра сӳтсе-явса, вĕсене социализмлă ăмăртăва хутшăнтарасси пулать.

Пирĕн вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем хушшинче Котласри вăрман тресчĕн, Верхне-Лупьенск вăрманпромхозĕн коллективĕсен тата Молотов ячĕпе тăракан заводри рабочисен чĕнĕвне сӳтсе-явса, çав чĕнӳ çине ĕçпе ответлессине организапилемелле.

Саратăв облаçĕнчи Надеждинск МТС коллективĕ кăçалхи тырпула кăтартуллă пухса кĕртессишĕн тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлессишĕн ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне пуçарчĕ. Надеждинск МТС коллективĕ çак ăмăртăва мĕнпур комбайнерсемпе трактористсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене хутшăнма чĕнет. Пирĕн республикăри малта пыракан Вăрнар районĕнчи ялхуçалăх работникĕсем, Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, государствăна тырпул, пахчаçимĕç, аш-какай тата ытти продуктсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртме; тырпула, вăрлăхлăх акнă курăксене, техникăллă культурăсене чи кĕске срокра тата пĕр таккаламасăр пухса кĕртме пулаççĕ. Çапла вара, Чăваш республики 25 çул тултарнă уявра илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн хамăран аслă Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнеççĕ.

Вăрнар районĕнчи ялхуçалăх работникĕсен пуçарăвне ВКП(б) Обком бюровĕ ырларĕ. Парти Обкомĕн бюровĕ вăрнарсен чĕнĕвне колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче, трактористсен, комбайнерсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен пухăвĕсенче сӳтсе-явма, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма хушрĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен колхозсемпе МТС-сем, колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăхĕнчи ытти работниксем хушшинчи социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек организацилесе ертсе пымалла. Ăмăрту тулашĕнче пĕр колхоз та, пĕр МТС та, хатĕрлев организацийĕ те юлмалла мар; ăмăртăва кашни колхозникпа колхозницăна, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене хутшăнтармалла. Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту чăннипех те мĕнпур ĕççыннисен ăмăртăвĕ пулса тăтăр.

Анчах та ăмăртăва хутшăнса обязательство илесси—çак ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Тĕп ĕç — илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçа кĕртесси пулмалла. Пирĕн сăмах—çирĕп сăмах. Сăмах патăн пулсан—ăна пурнăçа кĕрт! Çакăн пек социализмлă ăмăртăвăн лозунгĕ. Предприятисемпе колхозсен руководителĕсен, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен коллективсем, уйрăм рабочисемпе колхозниксем хăйсен обязательствисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, ăмăрту результачĕсемпе кашни ĕçлекене паллаштармалла. Ку тĕлĕшпе вырăнти пичетпе, хисеп кĕнекисемпе анлăн усă курмалла, агитаторсен хăйсен ĕçне ăмăрту ыйтăвĕсемпе таччăн çыхăнтарса туса пымалла.

Ăмăртăва кирлĕ пек организацилесе ертсе пыма пултаракан коллективсем малтанхи çитĕнӳсем туни çинчен пĕлтереççĕ. Шупашкар пристанĕн коллективĕ июль ухăнĕ планне тултарнă та ĕнтĕ. Ку коллектив халĕ июльри планран иртерсе таварсем нумайрах турттарассишĕн кĕрешет. Канашри вагонсем юсакан заводри малта пыракан цехсем те çак уйăхри плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пур çĕрте те хăватлăн сарăлса пырать. Çак ăмăрту пирĕн промышленноçна ялхуçалăхне çĕнĕ те пысăк ӳсĕмсем тума майсем уçса парать.

Предприятисем ăмăртăва хутшăнаççĕ

Республикăри предприятисем аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ. Çулĕр Халăх Комиссариачĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытакан Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ, ăмăртăва хутшăнса, III-мĕш кварталта вагонсемпе вĕсен кустăрмисене юсамалли, чугун çул валли запаслă пайсем хатĕрлемелли плансене сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Унсăр пуçне, çак ĕçсен июль уйăхĕнчи заданийĕсене 3 процент чухлĕ иртерсе пурнăçлама пуличĕ.

Çулĕр Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх, заводăн çак кварталта юр тасатмалли машинăсем туса памалла. Завод коллективĕ, ăмăртăва хутшăнса, çав задание срокчен пурнăçа кĕртме сăмах панă.

Заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем продукци нумайрах туса кăларассишĕн кăна мар, унăн хакне чакарассишĕн те кĕрешеççĕ. Кивĕ детальсемпе ытларах усă курса, продукцин хăйне ларакан хакне 3 процент чухлĕ йӳнетме вăй çитнă.

Завод коллективĕ аслă ăмăртури хăйĕн обязательствисене пурнăçа кĕртме тытăнă, чылай бригадăсемпе стахановецсем производствăллă вахтăна тăнă.

* * *

Куславкка комбиначĕ иртнĕ уйăхри производство программине ăнăçлăн тултарчĕ. Комбинат коллективĕ çак уйăхра татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет. Комбинатри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, III-мĕш кварталти производство программине срокран 10 кун малтан тултарма пуличĕ.

Комбинат коллективĕ Таван çĕршыва сыхлама кирлĕ продукцине туса панипе пĕрлех ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларма палăртнă. Çак кунсенчех кунта урана тăхăнмаллисем, витресем, тазсем, плуг тимĕрĕсем тата ытти япаласем те туса кăларма тытăнаççĕ.

Комбинатра ĕçлекенсем подсобнăй хуçалăхри тырпулпа пахчаçимĕçне вăхăтра тата пĕр таккаламасăр пухса кĕртес тĕлĕшпе, рабочисем пурăнакан çуртĕйсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе те татăклă обязательствăсем илнĕ.

Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва республикăри ытти фабрикăсемпе заводсем те хутшăнаççĕ.

Саратов облаçĕнчи Пугачев районĕнчи Надеждинск МТС работникĕсен коллективĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур МТС-сен комбайнерĕсемпе трактористĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата колхозниксемпе колхозницăсене ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Совет Союзĕ гитлерла Германие хирĕç туса пынă Отечественнăй вăрçă пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтернипе вĕçленчĕ. Сталин юлташ пире ĕмĕрлĕхе чапа кăларчĕ. Вăл ертсе пынипе эпир хамăрăн юратнă Таван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăвартăмăр. Эпир вăрçă вăхăтĕнче хамăр çулпуçпа полководец тавра таччăн пĕтĕссе тăтăмăр. Çĕнтерĕвĕн пĕрремĕш çулĕнчи тырпула пухса кĕртес ĕç пынă хĕрӳллĕ кунсенче эпир пуринчен малтан юратнă Сталин юлташăн ятне асра тытатпăр.

Эпир хамăрăн уйхирсемпе плантацисем тата пахчасем çине пысăк шанчăк хывса, савăнса пăхатпăр. Çурхи тырăсене эпир ĕмĕр асран каймăн кунсенче, пирĕн боецсем Берлина штурмлана вăхăтра, пирĕн халăха кӳнĕ инкек-синкексемшĕн ирсĕр тăшмана хаярран тавăрнă вăхăтра, акса хăвартăмăр. Пирĕн ĕç çĕнтерӳçĕ-воинсен паттăрла ĕçĕпе таччăн сыхăнса пынишĕн эпир хĕпĕртесе мухтанатпăр. Колхозниксемпе колхозницăсем вăя хĕрхенмесĕр ĕçлени Хĕрлĕ Çара çак аслă вăрçа çĕнтерӳпе вĕçлеме тата иксĕлми çирĕп мир çĕнтерсе илме пулăшнишĕн эпир хĕпĕртесе мухтанатпăр. Тырпул вăрçăра нимĕнпе улăштарма çук хĕçпăшал пулса тăчĕ. Халĕ, пирĕн халăх вăрçă юлашкийĕсене пĕтерессишĕн, хуçалăха юсаса ура çине тăратассишĕн кĕрешнĕ чухне те, тырпул хăватлă вăй пулса тăрать.

Партипе правительство мĕнпур колхоз хресченĕсене лайăх çитĕннĕ тырпула вăхăтра та тĕплĕн пухса кĕртме, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хамăрăн обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарма чĕнĕç. Тырпул пухса кĕртесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать. Эпир çав ĕçе государство умĕнчи хамăрăн ответлăха вĕçне çитиччěнех туйса тăрса тытăнтăмăр.

Вăрçă çулĕсенче Надеждинск МТС-ăн коллективĕ хăйĕн ĕçĕпе фронта мĕнле те пулин ытларах пулăшас тесе тăрăшрĕ. Çак çулсенче пирĕн МТС Саратов облаçĕнчи 178 МТС хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл тырпул акмалли тата тырăсене пăхса çитĕнтермелли, вĕсене пухса кĕртмелли плансене, колхозсене ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли плансене яланах чыслăн тултарса пычĕ. Пирĕн МТС хăй ĕçлесе паракан колхозсем вăрçăн йывăр çулĕсенче те ялхуçалăхне малалла аталантарса, тата лайăхлатса пыччăр, пĕтĕм хуçалăх тăтăшах ӳссе, çирĕплесе пытăр тесе тăрăшрĕ. Пирĕн коллектив вăрçă çулĕсенче техника мĕн пама пултарнине пĕтĕмĕшпех илме тăрăшрĕ. Николай Санжаревский ертсе пыракан трактор бригади иртнĕ çулта трактор ĕçĕсен планне 380 процент чухлĕ тултарчĕ, кашни урапаллă тракторпа 1165 гектар сухаларĕ, хăй ĕçленĕ уйхирсенчи тырпул тухăçлăхне 2,5 хут ӳстерчĕ. Унăн тăванĕ Степан Санжаревский комбайнна 1044 гектар вырса пуçтарчĕ. Çав бригадăсен опычĕ çакна кăтартса парать: МТС коллективĕ, вăрçă çулĕсенче те тăпрана ĕçлесе çемçетмелли тата тырпула пăхса çитĕнтермелли лайăхрах та ăнăçлăрах меслетсемпе усă курса, социализмлă çĕрĕçĕн культурлăхне малалла ӳстерсе пыма тăрăшрĕ.

Пирĕн коллектив пилĕк çул хушши кӳршĕри Захаркино МТС-ĕпе ăмăртса ĕçлет. Вăрçă çулĕсенче лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн МТС-а виçĕ хутчен ВЦСПС-па СССР Наркомземĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

Халĕ, тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсен тапхăрне кĕнĕ чухне, социализмлă ăмăрту пирĕн умра тăракан пысăк та кăткăс ĕçсен ăнăçлăхне татса памалли пĕртен-пĕр условии пулса тăчĕ. Халĕ, пирĕн халăх вăрçă юлашкийĕсене пĕтерессишĕн, хуçалăха юсаса ура çине тăратассишĕн кĕрешнĕ чухне те, тырпул хăватлă вăй пулса тăрать.

Партипе правительство мĕнпур колхоз хресченĕсене лайăх çитĕннĕ тырпула вăхăтра та тĕплĕн пухса кĕртме, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хамăрăн обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарма чĕнĕç. Тырпул пухса кĕртесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать. Эпир çав ĕçе государство умĕнчи хамăрăн ответлăха вĕçне çитиччěнех туйса тăрса тытăнтăмăр.

Вăрçă çулĕсенче Надеждинск МТС-ăн коллективĕ хăйĕн ĕçĕпе фронта мĕнле те пулин ытларах пулăшас тесе тăрăшрĕ. Çак çулсенче пирĕн МТС Саратов облаçĕнчи 178 МТС хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл тырпул акмалли тата тырăсене пăхса çитĕнтермелли, вĕсене пухса кĕртмелли плансене, колхозсене ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли плансене яланах чыслăн тултарса пычĕ. Пирĕн МТС хăй ĕçлесе паракан колхозсем вăрçăн йывăр çулĕсенче те ялхуçалăхне малалла аталантарса, тата лайăхлатса пыччăр, пĕтĕм хуçалăх тăтăшах ӳссе, çирĕплесе пытăр тесе тăрăшрĕ. Пирĕн коллектив вăрçă çулĕсенче техника мĕн пама пултарнине пĕтĕмĕшпех илме тăрăшрĕ. Николай Санжаревский ертсе пыракан трактор бригади иртнĕ çулта трактор ĕçĕсен планне 380 процент чухлĕ тултарчĕ, кашни урапаллă тракторпа 1165 гектар сухаларĕ, хăй ĕçленĕ уйхирсенчи тырпул тухăçлăхне 2,5 хут ӳстерчĕ. Унăн тăванĕ Степан Санжаревский комбайнна 1044 гектар вырса пуçтарчĕ. Çав бригадăсен опычĕ çакна кăтартса парать: МТС коллективĕ, вăрçă çулĕсенче те тăпрана ĕçлесе çемçетмелли тата тырпула пăхса çитĕнтермелли лайăхрах та ăнăçлăрах меслетсемпе усă курса, социализмлă çĕрĕçĕн культурлăхне малалла ӳстерсе пыма тăрăшрĕ.

Пирĕн коллектив пилĕк çул хушши кӳршĕри Захаркино МТС-ĕпе ăмăртăва кĕртнĕ çулсенче çав ăмăртăва хутшăнакан ытти коллективсемпе çыхăнăва тухнă. Ăмăртăва кирлĕ пек организацилесе ертсе пынă, ăмăртăва хутшăнакан ытти коллективсене ăнăçлă ĕçлеме вĕрентнĕ. Çавăнпа та Надеждинск МТС-ăн коллективĕ ăмăртăва кирлĕ пек организацилесе ертсе пыма пултаракан коллективсем çитĕнӳсем туни çинчен пĕлтереççĕ. Шупашкар пристанĕн коллективĕ июль ухăнĕ планне тултарнă та ĕнтĕ. Ку коллектив халĕ июльри планран иртерсе таварсем нумайрах турттарассишĕн кĕрешет. Канашри вагонсем юсакан заводри малта пыракан цехсем те çак уйăхри плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва республикăри ытти фабрикăсемпе заводсем те хутшăнаççĕ.

Малтисемпе танлашмалла

ЧКАЛОВСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление кашни колхозрах тĕплĕн сӳтсе-явaççĕ. Çавна май тырпул пухса кĕртме хатĕрленесси те районра чылай лайăхланчĕ. «Красный Октябрь» (председателĕ Булатов). Гвардеец» (председателĕ Баранов), «Кзыл-Тан» (председателĕ Фейзуллин), «РОКК» (председателĕ Арланова), «Маяк» (председателĕ Минаев) тата ытти нумай колхозсем тырпул пухса кĕртме пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Кунта, машинăсемпе пĕрлех кĕреплеллĕ çавасемпе çурласем те çителĕклĕ. Урапасем, ут таврашĕсем юсавлă. Халĕ витнĕ итемсемпе авăнсене, сушилкăсене юсаççĕ тата çĕнĕрен тăваççĕ.

Машинăсемпе вырнисĕр пуçне, кĕрхи тырăсемпе çурхи тулла çурлапа вырмалла пулать. Çавăнпа та районĕпе пурĕ 4000 яхăн çурла шăллаттарса хунă. Анчах районра машинăсем юсас ĕç çителĕксĕр пырать-ха. 128 жнейкăран 99-шне кăна юсанă, 32 молотилкăран 24-шне юсанă. Крупская ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Максимов), «Танк» колхозра (председателĕ Фуражников), «Пламя Октября» колхозра (председателĕ Краснов) çак вăхăта çитсе те жнейкăсемпе молотилкăсене юсаса пĕтермен. Кунта хăйсен япăх ĕçне çаплах запаслă пайсем çукки пе витсе лараççĕ. Запаслă пайсене вăхăтра тупас тĕлĕшпе хăйсем çак вăхăта çитсе нимĕн те туман.

Районра витнĕ итемсем хатĕрлесси те вăрахăн пырать. Паянхи куна 38 витнĕ итем, 11 авăн, 5 сушилка кăна хатĕр. Эпир кашни бригадăрах витнĕ итем, кашни колхозрах пĕрререн кая мар авăнпа сушилка туса хатĕрлес задача лартатпăр. Тырă вырма тухиччен вĕсене туса çитерме тăрăшатпăр.

24 колхозра тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕсене тунă. Анчах вĕсенче чылай çитменлĕхсем пуррине пула, ĕç планĕсене çĕнĕрен пăхса тухма тата плансем туса пĕтермен колхозсене пулăшма ялхуçалăх специалисчĕсемпе районри активран 38 çынна колхозсене ятăмăр. Çав çынсемех вара колхозсем тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслекен комисси составĕсене те кĕреççĕ. Районра юлса пыракан колхозсем пур-ха, вĕсен çак кĕске вăхăт хушшинчех малтисемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

М. МИРОНОВА,
Райкомри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Усть-Пинега запанĕнчи, Верхне-Лупьенск вăрманпромхозĕнчи тата СССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн Главсеверолесăн Молотов ячĕпе тăракан вăрман заводĕнчи работниксем Совет Союзĕнчи вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен мĕнпур рабочисене, служащисене, инженерсемпе техниксене ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Паттăр Хĕрлĕ Çар аслă полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пынипе Совет государствин чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварса гитлерла Германие аркатса тăкрĕ. Европăри халăхсене фашистла пусмăрлăхран çăлса хăварчĕ.

Совет Союзĕн тылри ĕççыннийĕсем хăйсен ырми-каннми ĕçĕпе кунран кун çĕнтерӳ туптаса пычĕç, Хĕрлĕ Çара фашистла Германие пĕтĕмпех те тĕппипех аркатса тăкма кирлĕ япаласене пурне те парса тăчĕç. Вăрман промышленноçĕнчи работниксем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хăйсен вăйне тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас ĕçе хывас тесе, çĕршыва тата Хĕрлĕ Çара кирлĕ вăрман материалĕсем парса тăчĕç.

Халĕ пирĕн çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Вăрман промышленноçĕнчи работниксем умĕнче çав тери пысăк задачăсем тăраççĕ. Нимĕç захватчикĕсем ишĕлтерсе хăварнă хуласемпе ялсене, фабрикăсемпе заводсене, шахтăсемпе чугун çулсене тӳрлетме май килнĕ таран ытларах вăрман материалĕ памалла пирĕн, Совет государствин экономикăри тата çар ĕçĕнчи хăватне тата çӳлерех çĕклемелле.

Совет халăхĕн тата унăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕн историллĕ аслă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса эпир, Усть-Пинега запанĕнче, Верхне-Лупьенск вăрманпромхозĕнче тата Молотов ячĕпе тăракан вăрман заводĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсем, техниксемпе служащисем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

Котласлес тресчĕн Верхне-Лупьенск вăрманпромхозĕ тăрăх:

1. 1945 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр вăрман хатĕрлемелли çулталăкри плана пур ассортиментсем енĕпе те тултарма, сахалтан та 15.000 кубометр вăрман материалĕ планран иртерсе пама.

2. 1945 çулта планран иртерсе пĕр миллион тенкĕ тупăш пама.

3. 1945—46 çулхи кĕркуннепе хĕллехи вăрман хатĕрлевне вăхăтра тата пахалăхлă хатĕрленсе çитме, çак çĕнĕ сезонра, иртнĕ сезонрипе танлаштарсан, 20 процент ытларах вăрман хатĕрлеме.

4. Рабочисемпе служащисен пурнăç условийĕсене малалла лайăхлатас тесе, пурăнмалли çуртйĕр тата культура строительствин пысăккĕшне аслăлатма, çĕнĕрен нумай хваттерлĕ тăватă çурт туса лартма.

5. Подсобнăй хуçалăхсенче вăйлă тырпул туса илме тата вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерме.

Двиносплав тресчĕн Усть-Пинегăри генеральнăй запанĕ тăрăх:

1. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне, палăртнă вăхăтран 19 кун маларах, сулăсем тăвас тата йывăç буксирсемпе турттарса тухас навигаци планне тултарма.

2. 1945 çулта планран иртерсе пĕр миллион тенкĕ тупăш пама.

3. Рабочисемпе служащисен йăла условийĕсене малалла лайăхлатма. Подсобнăй хуçалăхсенче вăйлă тырпул туса ăна вăхăтра пухса кĕме.

Молотов ячĕпе тăракан вăрман заводĕнчи тăрăх:

1. 1945 çулхи плана вăхăтчен тултарма тата планран иртерсе 25.000 кубометр хăма таврашĕ пама. Промышленноçпа транспорт панă пур заказсене те вăхăтра тата пĕтĕмпех тултарса пыма.

2. Ĕçлекен оборудованин тухăçлăхне 10 процент ӳстерме.

3. 1945 çулта продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетнипе 500.000 тенкĕ тупăш пама.

4. Рабочисемпе служащисен йăла условийĕсене малалла лайăхлатас тесе, пурăнмалли çурт-йĕр вăхăтра тата тĕплĕн юсама, подсобнăй хуçалăхсенче вăйлă тырпул туса, ăна кăтартуллăн пухса кĕртме тата вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартма.

Эпир рабочисемпе служащисене, инженерсемпе техниксене 1945 çулхи плана вăхăтчен тултарассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарса яма чĕнетпĕр. Нимĕç оккупанчĕсем ишĕлтерсе хăварнă районсенчи хуçалăха юсаса хăвăртрах ура çине тăратма тата çĕнĕ строительство валли ытларах вăрман материалĕ хатĕрлесе парар.

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ, пире çĕнтерӳ тума хавхалантаракан тата организацилекенĕ!

Сывă пултăр совет халăхĕн аслă çулпуçĕ тата полководецĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Усть-Пинега генеральнăй запанĕн чи, Верхне-Лупьенск вăрманпромхозĕнчи тата Молотов ячĕпе тăракан вăрман заводĕнчи работниксем пухăвĕсенче сӳтсе-явса йышăннă.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ, предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Канашри вагонсем юсакан завода наркоматăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пама йышăннă.

ПИР-АВĂРПА ГАЛАНТЕРЕЯ ТАВАРĔСЕНЕ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРМА ПУÇЛАÇÇĔ

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пир-авăрпа галлантерея таварĕсене ытларах туса кăларасси çинчен постановлени йышăннă.

РСФСР Наркомлегпромне 1945 çулăн иккĕмĕш çурринче тутăрсем, кашнесем, косынкăсем, тĕрĕсем тата ыттисем туса кăларассине ӳстерме хушнă. Пир-авăрпа лайăхрах сăрламалла тăвас тĕлĕшпе кивĕ цехсене юсаççĕ тата ятарласа çĕнĕ цехсем тăваççĕ.

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ умĕн

Чугун çул транспортĕнчи работниксем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне ирттерме хатĕрленеççĕ. Станцисенче, паровоз деповĕсенче тата вагон мастерскойĕсенче социализмлă ăмăрту обязательствисене епле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслеççĕ, лекцисем тата каласусем туса ирттереççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн облаçсенчи, крайсемпе республикăсенчи комитетсене çулйĕр управленийĕсемпе тата движени отделенийĕсемпе пĕрле железнодорожниксен кунпе уявланă май çамрăксен хуласенчи тата районсенчи вечерĕсене ирттерме хушнă. Çавăн пекех садсемпе стадионсенче çамрăксен уявĕсем, карнавалсем, спорт ăмăртăвĕсем, пултарулăх вечерĕсем пулса иртмелле.

Железнодорожниксен Центрти культура çурчĕ выраçсене темиçе агитпоезд яма хатĕрленет. Унăн художествăллă бригадисемпе лекторĕсем нумай пысăк узелсемпе хир станцийĕсенче пулаççĕ.

Магистральсем çинче кино-фестивальсем пулса иртмелле. Железнодорожниксен хĕрлĕ кĕтесĕсемпе клубĕсенче совет кинематографийĕн чи лайăх произведенийĕсене кăтартма хатĕрленеççĕ. Железнодорожниксемпе кино работникĕсем творчествăллă тĕлпулусем туса ирттереççĕ.

Çак кунсенче Мускавра ЦДКА стадионĕнче железнодорожниксен çуллахи спартакиади уçăлнă. Спартакиадăра «Локомотив» обществăн спортсменĕсем 800 çынна яхăн пулаççĕ. (ТАСС).

ХАЛĂХА КУÇАРАС ПИРКИ СОВЕТ СОЮЗĔ ПЕ ПОЛЬША ТУНĂ ПĔРЛЕХИ КОМИССИ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Польша Республикин Халăх Пĕрлăхĕн Вăхăтлăх Правительстви 1945 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче Мускавра Совет Союзĕнче пурăнакан поляксемпе еврей çыннисем совет гражданствинчен тухса Польшăна куçса кайма тата Польшăра пурăнакан вырăс, украинец, белорусс, русин, литовец çыннисем Польша гражданствинчен тухса Совет Союзне куçса килме пултарни çинчен тунă Килĕшӳ тăрăх, Совет Союзĕпе Польша çавăн пек çынсене куçарас пирки Пĕрлехи Комисси тунă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çав Пĕрлехи Комиссири Совет делегацине çаксене кĕртнĕ: Председатель-Советник А. М. Александров, делегаци членĕсем—И. А. Прокофьев тата полковник И. В. Антипов.

Польша енчен Пĕрлехи Комиссие çаксем кĕреççĕ: председатель—доктор Генрик Вольте, делегаци членĕсем — Александр Юлкевич тата Ирина Кучинская.

Комисси ĕçе тытăннă та ĕнтĕ, вăл Мускав хулинче вырнаçса тăрать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри парторганизаци

ЕЛЧĔК. Партин Курнавăшри пуçламĕш организацине январь уйăхĕнче кăна организациленĕ. Апла пулин те вăл чылай палла ĕçсем турĕ. Парторганизаци кунтаранчен пурĕ 9 пуху туса ирттернĕ, вĕсенче 12 ыйту сӳтсе-явнă. Юлашки пухура колхозсенче тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явнă.

Парторганизаци çумĕнче политшкул ĕçлет. Кунта коммунистсемсĕр пуçне комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем те вĕренме çӳреççĕ. Политшкул пурĕ 29 заняти туса ирттернĕ. Çав занятисенче Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи» çинчен çырнă кĕнекине вĕренсе тухнă тата «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренме тытăннă.

Парторганизаци ертсе пынине колхозра агитколлективăн ĕçĕ те чылай лайăхланчĕ. Агитколлектив агитаторсенĕ пухса 11 хутчен семинарсемпе канашлусем туса ирттернĕ. Агитаторсем колхозниксем хушшинче тăтăшах калаçусемпе докладсем туса пыраççĕ.

Ялта вулав çурчĕ те лайăх ĕçлет. Ана Краснова коммунистка ертсе пырать. Вăл хăрăнса ĕçленипе вулав çурчĕпе клуб ялта чăн-чăн культура вучахĕсем пулса тăчĕç. Клубра час-часах спектакльсем картса параççĕ, вечерсем пулса иртеççĕ. Вулав çуртне колхозниксем куллен хаçат-журналсем вулама çӳреççĕ. Килсе тăракан çĕнĕ хаçатсен витринине те кунта лайăх йĕркеленĕ. Стена хаçачĕсем вăхăтра тухса тăраççĕ.

Ял Советĕнче пурĕ 3 колхоз. Кашни колхоз çумнех агитаторсем çирĕплетсе тухнă. Ял Советне кĕрекен «Автогигант» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пынă пулсан, кăçалхи çул вăл ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхоз сурăх, сысна, чăх-чĕп ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарчĕ.

Çаксемпе пĕрлех парторганизаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Парторганизаци парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Кăçал кунта парти ретне пĕр çын та илмен.

Коммунистсем ял Советне хуçалăхпа политика задачисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр пулăшса пыраççĕ. Çавна пула Курнавăш ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухмалли II-мĕш квартал планне 73 процент çеç тултарнă. Ял Советĕнче государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕç те сӳрĕккĕн пулса пырать. Ял Советне кĕрекен колхозсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Асăннă çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

М. ЕГОРОВ.

Савăнăçлă тĕлпулу

Вăрнарти вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем хăйсен ретĕнчен фронта тухса кайнă юлташĕсене лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вĕсене кайнă чухне те лайăх ăсатнă, çемьисене яланах кирлĕ пек пулăшса тăнă. Халĕ те акă, тăшмана çĕнтернĕ паттăр воинсем киле тавăрнас чухне, вĕсене ăшшăн кĕтсе илме вăрман хуçалăхĕ пур енчен те хатĕр. Фронтовиксене ăçта тата мĕнле ĕçе вырнаçтарассине, мĕнле пулăшу нама кирлине йăлтах шутласа, палăртса хунă.

Объездчик пулса ĕçленĕ Федот Герасимов çак кунсенче çартан киле тавăрăнчĕ. Вăрман хуçалăхĕн коллективĕ Герасимов юлташа ăшă кăмăлпа, хавассăн кĕтсе илчĕ. Ана кĕтсе илме лашапа тухса, вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсемпе тĕлпулу организацилерĕç.

Савăнăçлă тĕлпулу! Паттăр воин киле тавăрăннă ятпа чапăллă апат хатĕрленĕ. Герасимов юлташа кунта чи хисеплĕ хăна вырăнне хурса йышăнчĕç. Унăн кăкăрне «За боевые заслуги» медаль тата «Гварди» значокĕ илемлетеççĕ. Унăн татах икĕ медаль—«Кенигсберга илнĕшĕн» тата «1941—45 çулсенчи Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн» медальсем илмелле.

Сĕтел тавра ларса тухса унпа пĕрле ĕçленĕ ĕлĕкхи тусĕсем фронтри тата тылри пурнăçсем çинчен калаçу пуçарчĕç.

— Акă эпĕ каллех сирĕнпе. Фронта эпĕ 1942 çулта кайрăм. Кайнăранпа мĕн вăрçă пĕтичченех манăн хаяр тăшманпа çынăçмалла пулчĕ. Çав тери пысăк йывăрлăхсем тӳссе иртертĕмĕр пулсан та, эпир тăшмана çĕнтертĕмĕр. Мĕншĕн тесен пире çĕнтерӳ патне аслă Сталин ертсе пычĕ. Виçĕ çул хушши фронтра пулса таçта та çитме лекрĕ. Пур çĕрте те эпир тыл фронт валли хĕпăшалсемпе боеприпассем, апат-çимĕç çителĕклĕ парса тăнине куртăмăр. Маттур ĕçлерĕр эсир те çак чапăлă çĕнтерӳшĕн! — тет гварди рядовойĕ артиллерист Герасимов юлташ.

Кĕтсе илекенсем пĕрин хыççăн тепри сăмах тухса калаççĕ. Вăрман хуçалăхĕн директорĕ Григорьев тата вăрман хуралĕн инспекторĕ Алексеев юлташсем вăрçă кунĕсенче мĕнле ĕçлени çинчен, çар çынни-сен çемьисемшĕн куллен тăрăшни çинчен каласа панчĕç. Вăрман хуçалăхĕн администрацийĕ Герасимов юлташа хăйĕн килне лесçе хăварма Алексеев коммуниста хушрĕ.

Ешĕл сĕм вăрман. Унăн варрине Йĕпреçе каякан тракт тăсăлса выртать. Виçĕ çул хушши пулман Герасимов юлташ çак таврара.

Лаша тăван салтакăн килĕ патне çитсе чарăнать. Ана хирĕç унăн арăмĕ, ачисем чупса тухса ăна ыталаса чуптăваççĕ. Нумай кĕтнĕ кун çавăрăнса çитнипе хĕпĕртесе арăмĕпе ачисен савăнăç кӳçӳлĕ шăпăртатса анчĕ... Тăван килти сĕтел хушшинче каллех тенĕр тĕлпулу, ăшă калаçу пуçланать.

Килти тĕрĕс-тĕкĕл пурнăçпăн, вăрçă чарăнса каллех мирлĕ пурнăç пуçланнăшăн пĕтĕм çемье тулли кăмăлпа савăнать.

Е. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Героя кĕтни

Вăштăр кăна вăштăр ăш çил вĕрет
Йывăç çулçисене чӳхентерсе,
Тăван яла паян герой килет
Çынсен чĕрисене çĕклентерсе.

Йăлтăр кăна йăлтăр çунса çиçеççĕ
Кăкăр тулли çап-çутă орденсем,
Ахальтен мар ĕнтĕ хатĕрленеççĕ
Васка-васка тăван яйăмăмсем.

Вăштăр кăна вăштăр ăш çил вĕрет
Йывăç çулçисене чӳхентерсе,
Тăван яла паян герой килет
Ялйыш чĕрисене çĕклентерсе.

Валентин УРДАШ.

Петэна суд туни

Судăн иккĕмĕш кунĕ

ПАРИЖ, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Петэна суд тăвакан ларура Поль Рейно свидетель каласа панине итленĕ. Çакăн хыççăн суд Даладье свидетельрен ыйтма пуçланă.

Республикăна пĕтересси,—тенĕ Рейно, — маршалăн чи малтанхи ĕмĕчĕ пулнă. Çар теорийĕсемшĕн республика режимĕ ответлă мар. Çав теорисем тăрăх Франци танк дивизийĕсем те, штурмлакан авиаци те кирлĕ пулман. Пире çапса аркатни парламент режимĕ ĕçлеменнинчен килнĕ.

Хăйĕн сăмахне Рейно çапла каласа пĕтерет: Петэн Франции сиенленĕ пек пĕр çын та хăйĕн çĕршывне нихăçан та çаван чухлĕ сиен кӳмен.

Тăхтав хыççăн, 17 сехет те 45 минутра, Даладье калама пуçланă. Даладье çапла каланă: 1918 çултан пуçласа аслă çар советне е çарти паллă вырăнсене Петэн килĕшмесĕр пĕр çынна та лартман. Политикăллă пурнăçа Петэн 1934 çулта, Думерг ертсе пыракан кабинет ĕçленĕ чухне, хутшăнчĕ. Çав тапхăр Франци хăйĕн хăрушсăрлăхне хăех хӳтĕлеме йышăннă тапхăр пулнă. Çав тапхăрпа усă курса, Петэн çар хатĕрĕсем туса кăлармалли укçа-тенкĕне 20 процента çити чакармалла тунă. Çарăн генеральнăй инспекторĕ пулса, вăл çĕршывăн сӳрĕр-тата сӳрçĕр-хĕвелтухăç пайĕсенче çирĕплетнĕ вырăнсем тумалли укçа-тенкĕне чакарттарнă.

Перемири умĕн тата перемири вăхăтĕнче пулса иртнĕ событисем патне куçса, Даладье 1940 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнче вăрçма пăрахасси çинчен йышăннă решени вăхăтсăр пулни çинчен калать. Çавăн пек туни,—хушса хурать Даладье,—Петэншăн дулсан тĕлĕнмелле мар, майăн 25-мĕшĕнчех вăл перемири çинчен каласатчĕ. Даладье суд ларăвне вăхăтлăха хупма ыйтать. 18 сехет те 45 минутра лару хупăнать.

Çитес лару июлĕн 25-мĕшĕнче пулмалла.

Судăн виççĕмĕш кунĕ

ПАРИЖ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, паян Петэн судĕнче Эдуард Даладье свидетельрен малалла ыйтнă. Даладье каланă тăрăх, халăх пухăвĕ Петэн маршала конституцие пăхса тухма мандат панă хыççăн икĕ кунтанах республикăна пĕтерсе хунă. Республика вырăнне «Франци государстви» пулса тăнă, унта вара Делонкль, Мессонье тата Дарнан пек кагулярсем пулнă авантюристсемне сутăнчăксем хӳтлĕх тупнă. Малалла Даладье Петэн вăхăтĕнче Франципе заложниксен системине те туса хуни çинчен тата французсене çĕршывран куçарса кайни çинчен калать. Петэн, тенĕ вăл, нимĕçсем умне Франци маршалĕ пек мар, нимĕçсен приказĕсене илсе вĕсене пурнăçа кĕртме хатĕр тăракан çын пек тухса тăнă. «Çак ирсĕр ĕç умĕнче,—тет Даладье,—французсен паттăр çамрăкĕсене аса илмесĕр тӳсме çук. Вĕсем, хĕпăшалсăрах тенĕ пек, Франци чыслăхне çăлма тухнă»:

Петэна хӳтĕлекен адвокат Пайен Даладьене çапла ыйту панă: Лаваль Петэнран ытларах айăплă тесе шутламастăр-и эсир?—тенĕ. Даладье çапла ответленĕ: «Мĕн пулса иртнишĕн пурнишĕн те чи малтан «государство пуçлăхĕ» Петэн ответлă», тенĕ. Суд председателĕ Монжибо, сăмах майĕпе каласа, Лавальпе аллаллăн тытăнса ĕçленине Петэн хăех йышăннине палăртнă.

Çакăн хыççăн присяжнăй заседательсенчен пĕри союзниксем Дьепа аннă хыççăн Петэн Гитлер патне янă телеграмма пирки ыйтнă. Суд председателĕ Монжибо — çак ыйту çине Петэн хăех ответ патăр, тенĕ. Анчах айăпланакан çав ответа парастăн пулман. Суд вара телеграмма паракан телеграфисткăна чĕнтернĕ. Монжибо вăл телеграммăна вуласа панă. Телеграммăра каланă тăрăх, Гитлера Петэн çапла сĕнӳ панă: Франци хăйĕн хăрушсăрлăхне хăех сыхласа тăтăр, çапла туни Франци «Европăри пĕрлешӳве» хăй ирĕкĕпе хутшăннине (урăхла каласан, уççăнах Германи майлă пулнине) кăтартса панă пулĕччĕ, тенĕ.

Суд председателĕ тата хирĕç тăракан организацин присяжнăй заседателĕ çав телеграмма пирки Петэн хăйех ответ патăр тесе çине тăрса ыйтнă. Пĕр чĕнмесĕр ларакан Петэн юлашкинчен çапла каланă: «Эпĕ нимĕн те илтместĕп, мĕн çинчен калаппине те пĕлместĕп», тенĕ.

Даладье каласа пĕтернĕ хыççăн тăхтав пулнă. Тăхтав хыççăн суд Франци президенчĕ пулнă Альбер Лебрен свидетельрен ыйтма тытăннă.

АНГЛИ КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ФРАНЦИПЕ ИСПАНИ ЧИККИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçатра «Британи юнайтед пресс» корреспонденчĕ Испани чикки-нчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Статьяра каланă тăрăх, Франципе Испани чикки урлă каçма питех те çăмăл. Чикĕри тĕп пунктсене те яйăх хуралласа тăраççĕ. Андайран пуçласа пĕтĕм чикĕ тăршшĕпех «тĕрĕссипе илсен, чикке сыллас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ». Франципн Атлантика океанĕпе Вăтаçĕр тинĕс çыранĕсенче пулăссен судниве тупса кирек ăçта илсе çитме те питĕ çăмăл. «Чикĕн икĕ енĕпех,—тесе сырать корреспондент, — гостиницăсем пур, вĕсен хуçисем пулса Испани фалангисчĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсем таркăнсене яланах йышăнма хатĕр. Эпĕ пĕр гостиницăна пĕлетĕп: унта коллаборационистсене (нимĕçсемпе пĕрлешсе ĕçленĕ çынсене) апатлантараççĕ, вĕсене хваттер параççĕ тата Испани правительстви шучĕпе тумлантараççĕ».

АНГЛИПЕ ФРАНЦИ СИРИПЕ ЛИВАН ПИРКИ ТУНА КИЛĔШӲ

ПАРИЖ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Бейрут хулинчен çапла пĕлтерет:

«Францин Левантри делегачĕне Вейне генералпа Британин Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи хĕпăшаллă вăйĕсен командующийĕ Пейджет генерал Сирипе Ливан пирки килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх Франци çарĕсем Хĕвелтухăç Сирирен тухса кайма, анчах вĕсем Хĕвеланăç Сирипе Ливан çыранĕсенче юласçĕ. Франци, унсăр пуçне Левантри хăнăр аэродромсене контроллесе тăрать. Çак килĕшӳ Франципе Британи власĕсем вăхăтлăха тунă килĕшӳ пулса тăрать. Çавăнпа та вăл ӳлĕмрех Сирипе Ливанран мĕнпур ют çĕршыв çарĕсене илсе тухас пирки тумалли ĕçсене пырса тивмест».

Вĕренекенсен çыру ĕçĕнче ялан тĕл пулакан йăнăшсем

Пирĕн чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхине вĕрени наукăн тĕп никĕсне вĕренсе пĕлмелли тата ăна пĕлнине кăтартса памалли май пулса тăрать.

Вĕренекен истори, географие тата ытти-не те чăвашла яка, шухăшсене пĕр-пĕрин-не сыхăнтарса каласа параймасть пулсан, çакă вара вăл предметсене тĕплĕн пĕлменнине кăтартать. Чăвашла аван, йĕркеллĕ каласа паракан çын хăй пĕлнине вырăсла та аван каласа памалла пултарать. Çавăнпа та вĕренекенсене аван каласа ăнлантармалла, çакă вĕренӳ пахалăхне хăпартма пулăшать.

Çакна вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те нумайĕшĕ манаççĕ. Вăтам шкулсенче вĕренекенсенчен хăшĕсем, чăваш чĕлхи çине çăмăлтарах пăхнăран та пулмалла, хăйсен çыру ĕçĕсенче питĕ нумай йăнăш-сем тăваççĕ. Тĕслĕхрен, Элĕк районĕнчи Сорм-Варринчи шкулăн IV-мĕш класĕнче вĕренекенсем 70 сăмахлă диктантра 30 — 35 йăнăш тунă. Ураскилтри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсенчен хăшĕсем кăçалхи пĕрремĕш çур çул вĕçĕнче çырнă 150 сăмахлă диктантра 38-шар йăнăш тунă. Çыру ĕçĕ çине çителĕклĕ пăхман пирки вĕренекенсен çыру ĕçĕнче яланах пĕр пек йăнăшсем пулаççĕ. Ялан тĕл пулакан йăнăшсем çаксем:

1. Интернационаллă тата урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенче пуланкан йăнăшсем:

а) Пуçламĕш формăра тăракан япала ячĕ «А» сасăпа пĕтсен, «А» тăррине лартса çырни. Тĕслĕхрен: Ураскильтри 7-мĕш класра вĕренекенсем «спичка», «корзина», «мина» сăмахсене «спичкă», «корзинă», «минă» тесе çырнă. Хăшĕсем «мина» сăмаха тĕрĕс çырнă, ăна учительница «минă» тесе йăнăш тӳрлетсе панă. Ку ĕнтĕ вĕрентекенсем хăйсем те ку правилăна лайăх пĕлменнине кăтартать.

б) Янăраканхупă сасăсене çырма пĕлменни. Ку йăнăша пур классенчи вĕренекенсем те тăваççĕ. Тĕслĕхрен, «митинг», «снаряд», «коробка», «подразделение», «корзинка», «инженер» сăмахсене «митинк», «снарят», «коропка», потразтеленире», «корсинка», «инженер» тесе йăнăш çырасçĕ. Хăшĕсем «граната», «спичка», «отряд» тесе çырас вырăнне «гранада», «сбичка», «одрят» тесе çырнă. Ку йăнăшсем вĕренекенсене урăх чĕлхерен кĕнĕ янăравлă хупă сасăллă сăмахсене вулама, калама лайăх вĕрентменнинчен килеççĕ.

в) **Сăмах варринче е вĕçĕнче çемçетекен «ь» паллă лартмасăр çырни.** Тĕслĕхрен, «револьвер», «батальон», «октябрь» сăмахсенче çемçетекен «ь» паллă лартмасăр «револвер», «баталон», «октябр» тесе çырасçĕ. Ку йăнăшсем çемçетекен «ь» паллă лартмалли çинчен калакан правилăна çирĕп пĕлменнинчен, творчествăллă çыру ĕçĕсем сахал тунинчен килеççĕ.

2. Сăмах варринче икĕ хупă сасă юнашар çырма пĕлменни. Çак йăнăшсем IV-мĕш класран пуçласа X-мĕш класа çитичченех пырасçĕ. Тĕслĕхрен, «сасси», «тĕллерĕ», «айккине», «еннелле», «сухалă», «аллине» тесе çырас вырăнне «саси», «тĕлерĕ», «айкине», «енеле», «сухалă», «алине» тесе çырасçĕ.

3. Сăмахра тĕл пуланкан е, э, ю, я сасăсене тĕрĕс çырма пĕлменни. «Эпĕ эсĕ, пĕрмаях, октябрь» тесе çырас вырăнне «епĕ, есĕ, пĕрмайах, октйабĕр» тесе (ĕлĕкхи правило тăрăх) çыраççĕ.

4. Сăмахра тĕл пуланкан А—Ĕ саспаллисен тăррине лартмасăр сиктерсе хăварни. «Унăн, лешĕ, евĕрлĕ, вăл» тесе çырас вырăнне «унан, леше, еверле, вал» тесе çыраççĕ.

Ку йăнăшсем сăмахра ударенисене тупма пĕлменнинчен килеççĕ. «А—Ĕ» сасăсем ытларах ударени умĕн е хыççăн илтĕнеççĕ.

5. Сăмах варринче саспаллисене сиктерсе хăварса çырни е пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарма пĕлменни. Тĕслĕх: «хăйĕн, курăк, хыçĕпе, сăртсем, урăй, çăкăр» тесе çырас вырăнне «хăĕн, курк, сăрсем, урă, çкăр» тесе çыраççĕ. (Чурачăк р., Йĕкĕрвар вăтам шкулĕ).

«Чарăнчĕç, ятласса, ĕшеннĕскерсем, Александрович» сăмахсене «чарăнч-ĕç, ятла-çса, ĕшеннĕск-ерсем, Алекса-ндрович» тесе куçарнă. Сăмахсене сиктерсе хăварни вăл вырăнти каласăпа ытларах усă курнинчен тата литературăллă калаçупа сахал усă курнинчен килет.

6. «Та, те» татăксене вырăн падежĕнчи аффикспа пăтраштарса пĕрле çырни. Тĕслĕх: «Çавăнпа та, пит те, паçăрхинчен те, унччен те, вĕсем те, вут та, ачасем те» тесе çырас вырăнне «çавăнпата, питте, паçăрхинченте, унчченте, вĕсемте, вутта, ачасемте» тесе çыраççĕ. Ку йăнăшсем япала ячĕсене, татăксене вĕреннĕ чухне вĕсем çинче сахал чарăнса тăнинчен килеççĕ.

Вĕренекенсен çыру ĕçĕсенче йăнăшсем нумайăн вĕреитекенсем çыру ĕçĕсене начар тӳрлетнинчен те чылай килет. Йăнăшсене тӳрлетнĕ хыççăн класра ачасемпе пĕрле анализ тăвас пулать.

Унсăр пуçне тата хăшпĕр учительсем вĕренекен ачасене тĕрĕс пĕлӳ парас вырăнне хăйсем пăтратаççĕ. Вĕсем хăйсем пĕлеймен пирки те нумай йăнăшсене юсамасăр сиктерсе хăваращĕ. Йĕкĕрвар шкулĕнче вĕрентекен учительница IV-мĕш класра вĕренекен ачасен çыру ĕçне «3», «4» паллăсемпе хакланă, анчах тетрадь сене тепĕр хут пăхса тухнă хыççăн унта юсамасăр сиктерсе хăварнă йăнăшсем питĕ нумай тĕл пулнă, çав çыру ĕçĕсене «2»-рен мала лартма юраман. Çав шкултах 3-мĕш класра вĕрентекен учительница 3-мĕш класра вĕренекен Сергеев çырнă 10 ĕçрен 5 ĕçне юсаман. Çыру ĕçне пĕр майпа çеç (слуховой диктант) туса ирттереççĕ, вăл та питĕ сахал пулать. Творчествăллă çыру ĕçĕсем пачах çук. Вулав урокĕсенче туса пымалли çыру ĕçĕсем те сахал.

Çыру ĕçĕнчи йăнăшсем тĕрĕс калаçма пĕлменнинчен те нумай килеççĕ. Вĕрентекенсем, хăшĕсем, вырăнти чĕлхепе тата вырăсла-чăвашла хутăш чĕлхепе калаçаççĕ. Тăван чĕлхене вĕрентекенсем тăван чĕлхе урокĕнче: «все же», «опять-таки», «обязательно», «действительно», «не только она, кона та вола», «конта та пор, онта та пор» тесе калаçаççĕ. Вĕрентекенсен чи малтан хăйсен тĕрĕс, яка, литературăллă чĕлхене калаçмалла, вара вĕренекенсем тĕрĕс калаçма, тĕрĕс çырма вĕренĕç.

Чăваш чĕлхи çăмăл тесе пулас, директорсем те, завучсем те, РОНО инспекторĕсем те тăван чĕлхене вĕрентекенсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ, вĕсен çыру ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартма тăрăшмаççĕ. Вĕренӳ меточĕпе те ĕçлени курăнмасть.

Çапла вара чăваш чĕлхине вĕрентекенсен ĕçне никам та тĕрĕслекен çук. Пирĕн çакна маннамалла мар: тăван чĕлхене литературăна лайăх вĕрентни вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçре пулăшать, ытти предметсене вĕрентме те çул уçса парать.

А. СОТНИКОВ.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ США-ра

ВАШИНГТОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кунта пресс-конференци пулса иртнĕ. Унта Кузнецов юлташ пуçпулса ертсе пыракан совет профсоюз деятелĕсен делегацийĕ пулнă. Производствăллă профсоюзсен конгресĕ чĕннипе, делегаци США тăрăх курса çӳремелле. Производствăллă профсоюзсен конгресĕн вице-педседателĕ Хэйвуд пресс-конференцире каланă тăрăх, совет профсоюзĕсен делегацийĕ çапла çӳресе, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хăйсен куçĕпе курса, унти пурнăçпа лайăхрах паллашма пултарать, çапла курса çӳрени совет профсоюзĕсемпе Америка профсоюзĕсем хушшинчи сыхăнăва çирĕплетме май парать. Пресс-конференцире пулнă журналистсем совет профсоюзĕсен делегацийĕпе питĕ интереслеççĕ, вĕсем совет профсоюзĕсен ĕçĕсем çинчен тата вĕсем мĕнле тытăнса тăни çинчен питĕ нумай ыйтса пĕлнĕ.

Кузнецов юлташ совет профсоюзĕсем епле йĕркепе организациленсе пыни çинчен каласа кăтартнă. Вăл çапла каланă: совет профсоюзĕсен делегацийĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пулни, унăн шухăшĕпе, пысăк усă кӳмелле, мĕншĕн тесен вăл Совет Союзĕпе Америка профсоюзĕсем хушшинчи пĕрлĕхе çирĕплетме пулăшать. Юлашкинчен Кузнецов юлташ производствăллă профсоюзсен конгресĕ те хăйĕн делегацине Совет Союзне ярассине шанса тăни çинчен каланă.

Пичет представителĕсене Хэйвуд çапла каланă: совет профсоюзĕсен деятелĕсем Чикагора, Детройтра, Филадельфире, Атлантик-ситире, Нью-Йоркра, Питсбургра тата Вашингтон штатĕнче пулаççĕ. Делегацин хăшпĕр членĕсем Канадăна та çитсе кураççĕ пулмалла, тенĕ.

ФРАНКОПА ТЫТАКАН ÇЫХАНĂВА ТАТМА ЫЙТАССĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра Испани ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен комитет пур. Çав комитет директорĕ Свит пичет представителĕсене çапла каланă: Петэн правительстви Испание куçарса кайнă Франци капиталне Франко арестлесе хунă. Франко çав Франци капиталне халĕ те каялла памасть. Çакăвара вăл Франци экономикине чылаях пысăк йывăрлăхсем кӳрет.

Испани ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен комитет Америкăра Испани таварĕсене хирĕç бойкот тăвассишĕн кампани пуçласа янă. Çавăнпа пĕрлех, комитет Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Франкопа дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахтарассишĕн пыракан вăйлă кампание пулăшса тăрать.

Ĕнер кунти хаçатсем «Кольерс» журналăн Гелхорн корреспонденчĕ каланине пичетлесе кăларнă. Вăл нумаях пулмасть Франципе тавăрăннă. Гелхорн америкăнепсене тата ЮНРРА организацине Франципе пурăнакан Испани республиканецĕсене пулăшма чĕнет. Çавăн пек çынсем хисепĕ Франципе 150 пин çынна çитет. Гелхорн каланă тăрăх, Испанире Франко пуç пулса тăнăранпа сахалтан та 350 пин çынна асаплантарса вĕлернĕ. Гелхорн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Франкопа çыхăну тытма пăрахмашкăн чĕнет.

АМЕРИКА ХАÇАЧĔ ГЕРМАНИ ПРОМЫШЛЕННОÇĔ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Германири оккупаци çарĕсен округсенчи командующийĕсене кăтарту панă. Çав кăтартура Германи промышленноçĕн пысăк тухăçлăхне упраса хăварма тата Германи çар промышленноçĕне Лапкă океан çинчи вăрçăра усă курма кирли çинчен калаçнă. Çав кăтартура «промышленноçа контроль туса тăрассин тĕп тĕллевĕ Германи промышленноçне хĕпăшалсăрлантарасси пулать» тесе калаçнă пулин те, Германири йывăр промышленноçăн пĕр пайне упраса хăварма, унпала çар ĕçĕнче усă курма палăртса хунă. Кăтартура палăртнă тăрăх, Германи производствипе çак тăвата енĕпе усă курма пулать: оккупаци çарĕсем енĕпе, Пĕрлешнĕ нацисен Германи тулашĕнчи çар ĕçĕсем енĕпе (хунта Японие хирĕç вăрçасси те кĕрет), репараци тӳлеттерес енĕпе тата Германи халăхне валли кирлĕ япаласем туса кăларас енĕпе.

Юлашки 10 кун хушшинче, тесе сырать хаçат, американецсен çар власĕсем Германи промышленноçне упраса хăварма кирлине ытларах палăртнă. Çар представителĕсенчен пĕри çакна ăна Лапкă океана васкасах материалсем тăратма кирлине ăнлантарса пачĕ.

«ТАЙМС» ХАÇАТ АРЦИШЕВСКИЙ ШАЙККИН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Поляк салтакĕсем Польшăна тавăрнас ыйту пирки «Таймс» хаçат çапла сырать: «Поляксен Англири верховнăй командованийĕ хăйсен салтакĕсем Польшăна тавăрнасси çине мĕнле пăхни пирки тата Арцишевский шайкки активланнă пирки нумай каласаççĕ. Çак ĕç Англи правительствин лару-тăрăвне те сиен кӳрет тесе шутлани ӳссех пырать. Англин çар власĕсем тата поляксен Англири верховнăй командованийĕ Англире тăракан поляксен хĕпăшаллă вăйĕсен пуласлăхĕпе сыхăнса тăракан ыйтусене сӳтсе-явaççĕ. Англи çар власĕсем каялла тавăрнакан поляк салтакĕсене хăй вăхăтĕнче транспорт (пама пулчĕç пулсан, вĕсем ĕçе васкаса тума кирлĕ марри çинчен ăнлантарса пачĕç пулсан, поляксен çар власĕсем хăйсене пăхăнса тăракан салтаксене тивĕçлĕ решение халех йышăнтарассăн курăнать. Пур салтаксене те начальниксем патне чĕнтерсе вĕсем тăван çĕршыва тавăрăнма кăмăлланипе кăмăлламанни çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Салтаксем тăван çĕршыва тавăрăнма хатĕр пулсан, вĕсене унта кĕтекен хăрушлăхсем çинчен асăрхаттарса, деклараци çине алă пусма хушаççĕ. Пĕр çар чăсĕнчи декларацире çапла каланă: «Çакна пĕлтеретĕп: Польшăна тавăрнасси пирки главнокомандующи каларнă 621-мĕш номерлĕ приказ çинчен эпĕ пĕлсе тăратăп, Польшăна тавăрнас пулсан, унта мана кĕтекен хăрушлăх пирки асăрхаттарнă. Эпĕ Польшăна тавăрнни государствăпа халăхшăн сиенлĕ пулнине пĕтĕмпех пĕлсе тăратăп пулин те, çавах та хама çартан яма ыйтатăп. Çартан янă хыççăн Англи территорийĕнче юлмастăп тесе шантаратăп». Деклараци çине алă пуснă салтака Данфермлин çывăхĕнчи лагере ăсатаççĕ, унта вăл пĕр пĕччен юлса тăван çĕршыва илсе каякан транспорта кĕтсе пурăнмалла. Салтаксене çартан тавăрас тĕлĕшпе нимĕнле хатĕрленӳ ĕçĕсем те туса иртермен пирки, çаван пек лагерьте темиçе уйăх пурăнасси поляк салтакĕсем тăван çĕршыва тавăрăнассине хирĕç хăйне майлă пропаганда туни пулать.

Лондонри поляк ушкăнĕсем çапла палăртаççĕ: Арцишевскин администрацийĕ хăйĕн «вăрттăн ĕçлесе пурăнмалли» планне Англи правительствине пăхăнса тăракан вăхăтлăх комисси урлă туса пырать. Рачинский граф уйăрса лартнă комиссин поляк членĕсем тĕплĕн суйласа илнĕ çынсем пулаççĕ. Арцишевский ушкăнĕ майлă тăракан çынсене кăна çав ĕçе лартаççĕ. Çакна ăна социальнăй обеспечени министерстви тĕлĕшпе пулса иртнĕ ĕç лайăх кăтартса парать. Çав министерство пĕтĕм тĕнчери поляк эмигранчĕсене вырнаçтарса тухнишĕн ответлă пулса тăрать. Ликвидаци ĕçне тума Урбанские уйăрса лартнине Арцишевский çине тăнипе пăрахăçа кăларнă, мĕншĕн тесен Урбанский хăй умне тăратнă условисемпе килĕшме пултарайман. Организаци «ĕлĕкхи пекех» ĕçлесе пымалла пултăр тесе, унăн штаб чăмăрне упраса хăвармалла пулнă. Урбанскипе пĕрле ытти темиçе чиновнике ĕçрен кăларнă, мĕншĕн тесен вĕсем «законлă правительство çине кирлĕ пек пăхман».

Шотландире поляксен çĕнĕ телеграф агентстви, «Святполь» текенскер, информаци министерстви аллинче пулнă çурта ярса илнĕ те çавăнтах пропаганда ĕçне тума пуçланă».

БОЛГАРИ ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИ ХИРĔÇЛЕСЕ КАЛАНИ

СОФИЯ, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви çапла пĕлтерет: юлашки вăхăтра тĕрлĕ ют çĕршыв хаçачĕсем тата радиостанцисем Афины хулинчен тухнă хыпарсене сараççĕ. Çав хыпарсем тăрăх, хĕçпăшалла темиçе болгар çынни Лерина районĕнче акăлчансен çар автомобильне тапăннă пулать, вара акăлчансен çĕр салтакне вĕлернĕ, иккĕшне амантнă тата тăваттăшне çаратнă пулать.

Болгари телеграф агентстви çакна пĕлтерме полномочи илнĕ: вăл ĕçе Болгари салтакĕсем хутшăнма пултарайман, мĕншĕн тесен Лерина районĕ Болгарипе кӳршĕллĕ марринчен те курăнса тăрать.

Лерина районне тухма пултараймаççĕ: Болгари çар власĕсем чикĕ урлă пĕр хĕçпăшаллă çын та каçмалла мар туса, çирĕп мерăсем йышăннă. Акăлчансен çар автомобильне тапăнни чăннипех пулнă пулсан, вăл ĕнтĕ хурлантарма тивĕçлĕ ĕç пулса тăрать, анчах та вăл ĕçе Болгари салтакĕсем мар, урăх çынсем тунă. Ана урăх çынсем тунине Лерина районĕн шалти лару-тăрăвĕ те кăтартса парать тата çакă вăл Лерина районĕ Болгарипе чикĕллĕ марринчен те курăнса тăрать.

Ответлă редактор
заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, çыхăçăлăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00378 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР